К С (ЧУВ)
К56
327014ув

Лидия Ковалюк

# Тавах, ачам



Национальная библиотека ЧР
4-032701

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

С(чув)
К
К-56

Лидия Ковалюк

# Тавах, ачам

калавсем



Ӳкерчӗкӗсем М. Андреевӑн

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
1990

ББК 84 Чув 7—5
К 26

**Ковалюк Л. А.**
К 26 Тавах, ачам. Калавсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990.— 37 с.

ПРОВЕРЕНО
2010 28 СЕН 2017

Кĕнекере шкул ачисен туслăхне, тимуровецсен ырă ĕçне кăтартса панă.

ББК 84 Чув 7—5

К $\frac{4803710201-117}{М 136(03)-90}$ 73—90

ISBN 5-7670-0343-2

32701гув

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1990 ç.



# ТАВАХ, АЧАМ

Кĕтесĕсем сарă сăрне çухатнă пĕчĕк портфельне Сережа алăк патнех, урайне, лартрĕ те васкасах пушмакне хывма пĕшкĕнчĕ.

— Сережа, хывăнма тăхта-ха,— терĕ амăшĕ, ывăлĕ шкултан таврăннине илтсе кухньăран тухнăскер.— Эсĕ ывăнтăн пуль те... Шыв пĕтрĕ, хам каяймастăп — кăмакара вутă çунать...

— Юрать, анне,— хуравларĕ Сережа çăнăхланнă алăллă амăшĕ ĕç хушнă-хушманах.

Вăрт çаврăнчĕ те тулалла васкарĕ. Васкарĕ пулин те, пÿрт алăкне шалтлаттармарĕ, хуллен хупрĕ.

Савăнать унăн амăшĕ: Сережа ÿрĕк ача. Темĕнле ĕç хушсан та, вăл итлет, хирĕçсе, кутăнлашса тăмасть. Ун пек хăтланма пĕлмест те вăл. Çулла сухан, хăяр, купăста шăварчĕ пахчара. Çум çумлама та ÿркенмерĕ. Пĕчĕк витрисемпе çырмаран шыв çĕклерĕ. Каярахпа утă таварчĕ, пуçтарчĕ те. Иртнĕ хĕлле, канмалли кунсенче, кашнинче пекех, ĕне-сурăх витинчи тислĕке ашшĕпе пĕрле кăларчĕ. Юр çусассăн, кил умĕнче çул уçрĕ.

Пӳрт ăшчиккине тирпейлĕ упрама та Сережа шутсăр юрататъ.

Урайĕнче ăнсăртран ӳкнĕ хут татăкне курсан, ăна вăл тӳрех çӳп-çап карçинккине кайса пăрахать. Сĕтелĕ ун яланах таса. Урокĕсене вĕренсе пĕтерсенех, мĕнпур кĕнеки-тетрадьне портфеле чикет. Тултан кĕрет çеç — атă-пушмакне тазра çăвать те, типĕ пир татăкĕпе шăлса типĕтсе, кăмака хыçне, килен-каяна курăнмалла мар çĕре, кĕртсе лартать.

Амăшĕ çав тери юратать Сережăна. Тепĕр чухне вăл пĕр кунтах ăна икĕ-виçĕ хут та çакăн майлăрах калать:

— Ку ĕçе хамах тăвăп, ачам. Эсĕ кан-ха. Ывăнтăн пуль. Тантăшусем паçăрах урамра выляççĕ... Кай эс те...

— Халех, анне,— тет вара сĕтел-пукан çинчен пур-çук тусана шăлакан е шкафри кĕнекисене майлаштарса тăракан, е апатланнă хыççăн чашăк-тирĕк çăвакан Сережа.

Урама тухма хăй пурпĕрех васкамасть. Тытăннă ĕçе ун пĕтермеллех! Выляма кайсан вара,— ара, ача ачах ĕнтĕ,— ăна пӳрте кĕртме питĕ йывăр. Юлташĕсенчен ниепле те хăпаймасть вăл. Чӳрече умне пыра-пыра, амăшĕ кĕтет-кĕтет ăна — Сережа çук та çук.

Халĕ те, килкарти алăкĕ уçăлса хупăнни илтĕнсенех, Сережа амăшĕ кантăкран пăхса илчĕ: ачи шыв патне кайнине курса юлас килчĕ ун.

Ĕнер юр çунăччĕ. Паян çанталăк ăшăтрĕ. Çул тăршшĕпех юрпа хутăш пылчăк çăрăнать. Унта-кунта шыв кӳлленчĕкĕсем ялтăраççĕ. Сережăн çутă пĕчĕк витрисем юрлă тумхахсене перĕнес пекех. Хăйне ятарлă кĕвенте туянса параймарĕç те ăна, шыв ăсма Сережа пĕлтĕртенпех пысăк кĕвентепе çӳрет.

— Пĕчĕк кĕвенте мана кирлĕ мар,— хуравлать вăл, амăшĕ е ашшĕ кĕвенте пирки сăмах хускатсанах.— Эпĕ ӳсетĕп вĕт... Халĕ пĕчĕк мар ĕнтĕ...

Япаласене тирпейлĕн тытма, хаклама тăрăшать вăл.

— Аçунах хывнă пуль эсĕ — питĕ перекетлĕ,— терĕ пĕррехинче кӳршĕри мучи кăмăллăн, Сережăна ырласа, хулпуççийĕнчен ăшшăн лăпкаса.— Аçу çирĕм çул ĕнтĕ пĕр тракторпах

ĕçлет. Тирпейлĕ тытать. Машинăна упрас пулать, ăна тума çăмăл мар тет.

Çавăн чух Сережа калама çук хытă савăнчĕ. Хăйне мухтанăшăн, тата ытларах — ашшĕне ырланăшăн.

Шухăша путнă Сережа çăмăллăн утать. Пушмакĕ айĕнчи юрпа хутăш пылчăк икĕ еннелле йăрт! та йăрт! сирпĕнет. Тĕллĕн-тĕллĕн ярр! шуçать ура. Витрисем çапкаланаççĕ. Вĕсене тытĕччĕ, силленме чарĕччĕ — алли çитмест. Хăй пурпĕр хаваслă: паян та унăн дневникне икĕ «5» паллă лартрĕ учительница. «Маттур эсĕ, Сергей», — терĕ. Шел, çакăн çинчен амăшне каласа кăтартма Сережа ĕлкĕреймерĕ. Ку темех мар-ха, калĕ. Амăшĕ те, ашшĕ те хĕпĕртĕç. Шыв кӳрсе килнишĕн те мухтĕç.

...Кӳршĕре, икĕ кил урлă, Пăлаки кинемей пĕчченех пурăнать. Ватăлнă вăл. Икĕ-виçĕ вутсыппи те аран йăтать. Пĕрре кăмака хутмалăх вутăшăн сарайне тăваттă-пиллĕк кайса килет. Алли ун хытă ыратать иккен. Утасса та хăй аран утать. Шыв çĕклеме вăй юлмарĕ тесе, хĕлле ĕнине сутрĕ. «Икĕ сурăх анчах хăвартăм ĕнтĕ, — терĕ вăл хурлăхлăн, — вĕсене пăхма та кансĕр те-ха, выльăх чунĕсĕр кӳршĕсенчен намăс пек».

Пушă вăхăт тупăнсан, Сережа ашшĕ Пăлаки кинемее кирек хăçан та пулăшать. Иртнĕ хĕлле ăна валли вăрмантан тракторпа вутă турттарса килчĕ. Кайран çав вутта вăл татрĕ, çурчĕ... Пахча картине те час-часах юсаса тăчĕ.

Сережа хăй те Пăлаки кинемейшĕн тем тума та хатĕр. Хисеплет, хĕрхенет ăна. Çуллахи вăхăтра, кĕтӳ кĕрсен, кинеми сурăхĕсем килне час-часах таврăнмастчĕç. Вĕсене ун чух яланах Сережа шыраса тупса хăваласа килчĕ. Савăнатчĕ вара Пăлаки кинемей, Сережăна мухтатчĕ: «Ах, — тетчĕ, — эсĕ пулмасан, хам ăçтан шыраса тупăттăм вĕсене? Тавах сана, ырă ачам! Пысăк пул».

Майăр сĕнетчĕ вăл хăйне пулăшакана. Илме аван мар та, анчах сĕннĕ япалана илмесен, кинемей кӳренме те пултарĕ.

— Ме, ачам, ме... Ан вăтан, укçалла туянман. Эпĕ хам

çавах çиейместĕп: шăлсем пĕтрĕç...— Çапла каласа, Пăлаки кинемей Сережăна чашăк туллиех майăр парса яратчĕ. Вайпа тенĕ пекех.

Пăлаки кинемейĕн ывăлĕ пур тенине Сережа илтнĕ. Курасса вăл ăна пĕртте курман. Темле çын вăл? Çав тери хытă чĕреллĕ пуль çав. Кавказра пурăнать иккен. Мĕншĕн вăл çулталăкра та пĕрре килсе каймасть-ха амăшĕ патне? Ватта пулăшу кирлĕ. Сайра хутра, тахçанран тахçан, посылкăпа майăр янипех ырă пуласшăн-и?

Çапах та ывăлĕ пирки Пăлаки кинемей нихăçан та усал сăмах каламасть. «Пурăнтăр хăй пĕлнĕ пек. Ăна лайăх пултăр. Эпĕ ĕнтĕ хамăнне пурăнса ирттернĕ»,— тет кăна. Туять Сережа: вăл, ватлăхра тăр-пĕччен юлнăскер, хытах кулянать, анчах хăйĕн хурлăхне çын умĕнче ытлах палăртасшăн мар, тепĕр чухне, ырлама сăлтав çук çĕртех, ывăлне ырлама тăрăшать.

...Паян та Сережа киле валли шыв кӳрсе килме çырманаваскарĕ. Пăлаки кинемее курчĕ те шеллесех кайрĕ: кĕвентепе шыв йăтнăскер, сăрталла ниепле те хăпараймасть. Аялалла шăва-шăва анать вăл. Темле ӳкмест. Витрисенчен шыв чӳхенсе тăкăннă — юра путăкласа пĕтернĕ.

«Акă каллех утма тăрĕ те кинемей шуçса ӳкĕ»,— шикленчĕ Сережа. Ăна çав инкекрен хăтарас тесе, хăйĕн пушă витрисене тăвайкки хĕррине лартрĕ те ватă çын еннелле васкарĕ вăл.

— Кинемей,— кăмăллăн каларĕ Сережа ун патне çитсен,— тăхта, ан ут. Çĕклемне çĕре ларт-ха.

Вăйĕ пĕтнĕ хĕрарăм витрисене юр çине лартрĕ.

— Ах, ачам, каллех сана чăрмантаратăп,— терĕ вăл.

Сережа унăн çĕклемне йăтрĕ. Палăрмаллах пĕкĕрĕлсе пулин те, тăвайкки тӳпемне хăвăртах çитрĕ, унтан, каялла чупсах анса, халсăрланнă ватă çынна çавăтса хăпарчĕ.

Кăштахран Сережа амăшĕ чӳречерен ăнсăртран пек пăхрĕ те ывăлне курчĕ. Тĕлĕнчĕ: «Ытла хăвăрт çаврăнса çитрĕçке». Анчах Сережа йывăр çĕклемĕпе кил енне пăрăнмарĕ,

урамваррипе тăваллах утрĕ. Ун хыçĕнчен Пăлаки кинемей нимсĕр-мĕнсĕрех кăштăртатса пычĕ. Сережăна хирĕç юлташĕсем Петĕрпе Иван шкултан таврăнаççĕ. Иван хавхаланса Сережăна тăвайккине йĕлтĕрпе ярăнма чĕнчĕ. Сережа килĕшрĕ. Кăштах тăрсан, килне кĕрсе тумланса тухрĕ. Хĕллехи çутçанталăкпа киленсе, тарăннăн сывласа илчĕ те юлташĕсемпе пĕрле савăнса тăвайккинчен ярăнса анчĕ. Сережа амăшĕ шухăшĕнче ăна юлташĕсемпе туслă пулнăшăн мухтарĕ, ывăлĕ лайăх çын пулассине чунĕпе шанчĕ.





# ХĂРАВÇĂ

Иртенпех сивĕ çумăр çурĕ, ачасем шкултан тухас умĕн кăна чарăнчĕ. Урам варринче — хуп-хура пылчăк. Айккинчи çерем те епрелнĕ.

Сăрт хĕррине çитсессĕн, Толя кăштах кукленчĕ те çырманалла йăрр шуса анчĕ, йĕлтĕр çинче пекех. Ун хыççăн Çемен виркĕнчĕ, вара — Лева.

Анюта Иркшапа юнашар, алла-аллăн тытăнса анасшăнччĕ. Иркка хирĕçлерĕ.

— Эп,— терĕ вăл,— ун пек ярăнмастăп. Карта çуммипе каятăп.

— Хăратăн-им? — ыйтрĕ Анюта.

Çакна Тольăпа Çемен илтрĕç, Ирккаран кулма пуçларĕç:

— Хăравçă!

— Иркка — хăравçă!.. Хăравçă!..

Çыранри хăвалăх айккинче ачасем чылай хушă тăчĕç: каçă çук — юхса кайнă.

Уяр çанталăкра шыв кунта шăнкăртатса çеç выртать. Чышкăран пысăкрах чулсене те хăшпĕр тĕлте пытараймасть.

Халĕ, ав, тулса кайнă, кĕрлет кăна! Çав тери хаяр. Шыв

явӑнать, кӑпӑкланать... Икӗ хут ытла сарӑлнӑ пуль. Мӗн тумалла? Епле каҫмалла?

— Анюта, атя кӗперпе,— сӗнчӗ хӑйӗн тантӑшне Иркка.

Кӗпер пур, анчах чылай инҫетре, анатра. Ватӑсем те унтан ҫаврӑнса ҫӳресшӗн мар та, ачасем вара унтан кайӗҫ-и!

— Тӑхта-ха эс, тӑхта,— чӗвӗлтетрӗ Анюта, Иркка ҫине ҫавракан хура куҫӗпе пӑхса.

Иркка пӗлет: Анюта нихҫан та васкамасть. Кирек ӑҫта та вӑл юлташӗсенчен ытларахӑшӗ мӗн каласса кӗтет, ялан вӗсен шухӑшӗпе килӗшет. Ҫакӑншӑн Иркка ӑна тепӗр чух хытах тарӑхать. Акӑ халь те вӑл Анютӑна кӳренчӗ, анчах ним те шарламарӗ. Ушкӑнран уйрӑлса утмах шут тытнӑччӗ вӑл — Толя кӑшкӑрса ячӗ:

— Эсир кирек мӗн хӑтланӑр, эпӗ сиксе каҫатӑп!.. Ҫавӑнтан, авӑ, ҫавӑнтан... Унта ансӑртарах...

Ачасем пурте Толя кӑтартнӑ еннелле, тӑвалла, тинкерчӗҫ.

— Эп те!— юлташӗ майлӑ пулчӗ Ҫемен.

— Эп те,— иккӗленерех каларӗ Лева та.

— Эп те юлмастӑп,— терӗ Анюта.— Иркка, атя эс те.

— Мӗн эсӗ ӑна чӗнетӗн!— йӗкӗлтенӗн сӑмах хушрӗ Ҫемен.— Иркка — хӑравҫӑ. Вӑл кунтан тем тусан та каҫмасть.

Иркка паян ҫӗнӗ кӗпине пӗрремӗш хут тӑхӑннӑ. Ӑна хӗрачан, тирпейлӗхе юратаканскерӗн, тахҫанчченех таса упрас килет.

Мӗнпе те пулин вараланасран класра вӑл кунӗпех хытӑ сыхланчӗ, переменӑсенче ашкӑнакан ачасенчен пӑрӑнса ҫӳрерӗ. Сӑртран униче карти ҫуммипе аннӑ чухне те аркине пылчӑк сирпӗнесрен хӑрарӗ, васкамасӑр, асӑрханса утрӗ. Шыв урлӑ мӗнле-ха вӑл сикӗ? «Ун пек йӑлтах лапӑртанса пӗтӗп»,— шухӑшларӗ Иркка. «Пымастӑп»,— теме ҫавах хӑяймарӗ.

Ирӗксӗртен утрӗ Анюта хыҫҫӑн Иркка. Хӑйне итлеменшӗн, кӗперпе ҫаврӑнманшӑн Анютӑна сассӑр вӑрҫса та илчӗ.

Толя та ӑна килӗшмерӗ, ытла вӗҫкӗн пек туйӑнчӗ.

Иркка ҫакна нумай асӑрханӑ: Толя яланах малта пулма,

кирек ăçта та пуçару тума тăрăшать. Класра вăл — пĕртен-пĕр отличник. Юлташĕсене пулăшать. Ку питĕ аван. Анчах ку сахал пек хăйне. Шкула кайнă е киле таврăннă чухне те ушкăн варринче е хыçĕнче мар — час-часах умĕнче утасшăн вăл. Вăйăра та хăй ертсе пырасшăн. Ачасем пăхăнманнине сиссенех, вăл пăрахса каять. Вăрттăн, шарламасăр.

Халь те вăл малта. Пысăкрах чул е тăпра муклашки тĕлĕнчен пăрăнса иртмест, сиксе каçать. Вăрăм ураллăскершĕн нимле чăрмав та çуккă пек. Левăпа Çемен ун хыççăн аран ĕлкĕрсе пыраççĕ. Чупĕччĕç — чупаймаççĕ, пушмакĕсем, çилĕм пек çыпăçнипе, çав тери йывăрланнă.

Левăна уйрăмах йывăр. Вăл пĕр класри ачасенчен пуринчен те пĕчĕк, имшеркке. Кĕркунне те, хĕлле те çине-çинех гриппа е пыр шыççипе чирлет. Шеллет Иркка ăна, хисеплет те. Лева шутсăр ырă кăмăллă, вăйĕ çитнĕ таран кашнинех пулăшма хатĕр, никама нихçан сивĕ сăмах каламасть. Пĕркун вăл шкулта чирленĕ Çемене килне çитичченех çавăтса, туп-тулли сумкине çĕклесе таврăнчĕ. Хăй йĕп-йĕпе тара ӳкрĕ. Çеменĕ Левăна хисепленине Иркка пачах та асăрхаман.

«Пускиллĕ пурăннипе çеç иккĕшĕ пĕрле çӳреççĕ»,— шухăшлать вăл. Çемен — хыт кукар. Ĕнер Ирккан ручки çырма пăрахсан, хăйĕн тепĕр ручкине, дневникĕ хушшинче упранаканнине, темĕнле тархасласа ыйтсассăн та памарĕ. «Памастăп»,— терĕ те урăх пĕр сăмах чĕнмерĕ, илтсен те илтмĕше печĕ.

«Лева, ан кай вĕсемпе, кĕперпе çаврăнар,— тет хăй ăшĕнче Иркка.— Вара Анюта та пирĕнпе пырĕ...»

Аçтан илттĕр унăн сассăр чĕнĕвне Лева? Çемен çумĕнчех тапăлтатать. Çырма кукăрне, юхăм ансăрланнă вырăна, çитесси вунă-вуникĕ утăм юлсан, Толя хăвăрт-хăвăрт чупса кайрĕ те çыран хĕрринчи лаптака чул çинчен ялт! çех сикрĕ. Чăлт! чамплатрĕ шыв леш енче. Пылчăк шăпăрр!.. сапăнчĕ йĕри-таврана.

— Эпĕ каçрă-ă-ăм! — кăшкăрчĕ Толя, питĕ паттăрла ĕç тунă евĕрлех хытă савăнса.— Сик, Çемен!.. Сик, Лева!..

Ирккa шеллерĕ Тольăна: унăн брюкийĕ те, пиншакĕ те, сумки те пĕтĕмпех вараланнă. Лапрана путнă урисене те хăй аран кăларчĕ. Пушмакĕсем хăмăр тăм ăшне пулнă. «Амăшĕ ятламĕ-ши ĕнтĕ? — шухăшларĕ Иркка.— Кĕперпе çавăрăннă пулсан, тасах юлатчĕ... Мĕн усси кунта килни?.. Э-э, пуçару турĕ-çке вăл... Ун хыççăн килтĕмĕр».

Толя хыççăн сикнĕ Çемен ура çинче тытăнса юлаймарĕ, кăнтарнă аллисемпе кӳлленчĕке тăрăнчĕ. Сирпĕннĕ лапра шĕвекĕ Лева куçне тиврĕ. Лева вара, сикме хатĕрленнĕскер, пуçне пĕксе, каялла чакрĕ, питне сăмса тутрипе шăлчĕ.

— Анюта! Каç хăвăртрах! Каç!..— терĕ Толя.

— Иркка-хăравçă, тен, эс те сикен?.. Сик!.. Эй, санран пулать-и? Хăравçă çав эсĕ!.. Сан пекки урăх çук та пуль,— янăрашрĕ Çемен.

Иркка хăй тарăхнине палăртмарĕ, чăтрĕ. Вăл чăнах хăрарĕ, хăйшĕн мар — Левăшăн. Çак имшеркке ача шыва кĕрсе ӳкесрен, шăнса чирлесрен хăрарĕ вăл.

— Лева,— пăшăлтатрĕ Иркка, ун патне çывхарса, вăл çеç илтмелле,— ан сик, атя каялла... кĕперпе.

Иркка сĕнĕвне Лева лайăх илтрĕ. Ăшĕнче ăна вăл ырларĕ. Çавăнпа кăшт иккĕленсе тăчĕ: «Тен, чăнах та, сикес мар...» Шел, çав шухăша кĕçех пăрахăçларĕ. Тантăшĕсенчен юлас килмерĕ ун.

«Эс те хăравçă, Лева-хăравçă»,— теесрен шикленчĕ. Вара, Тольăпа Çемен пекех, вăл та лаптака чул çинчен сикесшĕнччĕ, анчах пылчăклă ури яка чула перĕннĕ-перĕнменех ярр! шуçрĕ. Ача, чикеленсе, шыва шăмпăлтатрĕ.

Ирккан ăшĕ пӳлĕнчĕ, хытă пăлханнипе анрасах кайрĕ вăл.

Унтан тăна кĕнĕ пек пулчĕ те пĕтĕм вăйĕпе кăшкăрса ячĕ:

— Пулăш-ă-ăр!.. Левăна!..

Ӳкнĕ-ӳкменех аллисемпе çапкаланчĕ Лева. Çăлăнăç шыраса, мĕнрен те пулин тытма тăрăшрĕ, анчах нимрен те тытаймарĕ. Кĕрлесе, явăнса юхакан шыв ăна юхтарса кайма пуçларĕ. Çакă пĕтĕмпех пĕр самантра, куçа хупса илнĕ хушăри пек, пулса иртрĕ.

Шыв леш енчи Толя та, Çемен те, ним тума аптраса, вырăнтан та хускалмарĕç.

«Хăтараймаççĕ... Лева ишеймест... Путать вăл...» — сехĕрленчĕ Ирккa. Паçăр çипуçне вараласран асăрханни халĕ ăна ытлашши курнăçланнăн çеç туйăнчĕ. Никама шанмасăр, никама кĕтмесĕр, хăрах аллипе хăва вуллинчен çатăрласа тытса, шыва кĕрсе кайрĕ. Пĕр шиксĕр. Тантăшĕсене тĕлĕнтерсе.

Сивĕ те пăтранчăк шыв ăна малтан хытă шăнтрĕ. Кĕçех, тахăш самантра, сивве туйма пăрахрĕ Ирккa. Манчĕ вăл ун çинчен. Хăрушла юхăм хăйне халь-халь юхтарса каясса та пĕлмерĕ — тарăнран тарăна анчĕ. Тантăшне хăтармалла! Вăл çак тĕллевпе хастарланчĕ. Ĕлкĕрчĕ. Икĕ аллине те малалла кăнтарса, пĕвĕпе туртăнса, пуçĕ таранах путнă Левăна сумкинчен ярса илчĕ те çыраналла сĕтĕрме васкарĕ.

«Çăлтăм», — савăнса шухăшларĕ вăл. Хăй сасартăк сулăнса кайрĕ, кăшт çеç ӳкмерĕ — шăпах çав вăхăтра Анюта тăсса панă йăмра тураттинчен хăрах алăпа çатăрласа тытрĕ...

Тепĕр минутран Ирккa, сăмах чĕнме хăяйман Анютăран, сиксе чĕтрекен Левăран пăрăнса, сасăпах йĕрсе ячĕ.

Шыв тепĕр енче икĕ юпа пек тăракан Тольăпа Çемен каялла каçса Левăпа Ирккaна пулăшма ăс та, вăй та çитереймерĕç.





# ЙĂНĂШ

Тарас, Унтри тата Кĕçтенкки вăрмана çырла татма килчĕç. Лутра çатан урлă каççассăн, йывăççем хушшине кĕриччен, прачак умĕнче вĕсем чарăнса тăчĕç.

— Хăш еннелле кайăпăр? — ыйтрĕ Кĕçтенкки хăйĕн тантăшĕнчен. — Ăçта çырла нумай? Эпĕ пĕлместĕп.

Çырла тĕлне Кĕçтенкки чăнах та пĕлмест. Кăçал çак вăрмана пĕрре те килсе курман вăл. Пĕлтĕр те ку вăхăтра, ачасем çырлана çӳренĕ чухне, пионер лагерĕнче каннăччĕ.

— Эп те пĕлместĕп, — терĕ Тарас.

Сасси ун вăйсăррăн тухрĕ. Пичĕ хĕрелсе кайрĕ. Ку ĕнтĕ вăл пăлханнин палли пулчĕ. Хăй кăштах пăлхансан та, пичĕ ун часах хĕрелет. Иртнĕ çулла вăл кунта асламăшĕпе пĕрле икĕ хут та килнĕччĕ. Çырлине самаях татнăччĕ. Хăш тĕлте çав вырăн? Ăна халĕ Тарас ниепле те тупаймĕ. Вăл çавăнпа хăйне лайăх мар пек туйрĕ.

Унтри канмалли куна хуларан килнĕ пиччĕшĕпе ĕнер çеç кунта çырла татрĕ. Çырла нумай вырăна эпĕ пĕлетĕп теме шутланăччĕ вăл, анчах ун пек калама ăна тем кансĕрлерĕ.

— Çырла вăл... Пĕр çĕрте çех-ши?–сăмах хушрĕ Унтри.– Вăл таçта та пулĕ. Тупатпăрах! Атьăр...

— Атьăр эппин,— унпа килĕшнĕ пек пулчĕ вара Кĕçтенкки те.— Çак прачакпа кăштах кайăпăр та, сылтăмра уçланкă пурччĕ. Тен, унта тем чухлех çырла!

Прачака икĕ енчен те йывăçсем — шурă хурăнсем, шупка симĕс вулăллă ăвăссем, хăмăр çатракаллă шĕшкĕсем — хĕссе лартнă. Иккĕн юнашар утма та май çук. Ачасем умлăнхыçлăн пыраççĕ. Малта — Кĕçтенкки, Унтри — варринче, кайра — Тарас.

Кĕçтенкки — лăпкă ача. Калаçма вăл ытлах юратмасть. Халь те, ав, ним шарламасть. Вăл, тантăшĕсенчен пĕвĕпе чылай çӳллĕскер, хăйне асли пек туять. Унтрие те амăшĕ вăрмана ăсатнă чухне: «Кĕçтенккие итле, унран ан уйрăл»,– терĕ.

Унтри никама та пăхăнасшăн мар. Хăй мĕн тума шухăшлать, çавна тăвасшăн. Акă вăл шурă лĕпĕш курчĕ те ун хыççăн ыткăнчĕ — çăра йывăç тĕмĕсем хушшине яшт! тапса сикрĕ. Такăнчĕ — сулăнса кайрĕ, анчах ӳкмерĕ, сылтăм аллинчи пĕчĕк карçинккине çеç хурăн вулли çумне çат! çатлаттарчĕ.

— Ан ашкăн,— асăрхаттарчĕ ăна Кĕçтенкки, мăн çын пек.— Çухалса юлăн.

— Эпĕ çухалăп-и?.. Ку вăрмантан эпĕ куç хупса тухăп!— терĕ Унтри кӳреннĕ пек, Кĕçтенкки енне çаврăнса пăхмасăр, сап-сарă çӳçне сăлтавсăрах тăрмаласа.

Лĕпĕшĕ ун таçта вĕçсе тарчĕ — Унтри куçран çухатрĕ ăна. Çавăнтах сарă чечеклĕ курăк асăрхарĕ.

— Атьăр-ха, Кĕçтенкки, Тарас, чей курăкĕ татар. Тем чухлех! Епле хитре тата — сап-сарă!— терĕ вăл.

— Эпир çырлана килтĕмĕр пуль?— сиввĕнрех хуравларĕ Кĕçтенкки.— Лĕпĕш хăвалама тытăнсан, чечек татса аппалансан, çырласăрах юлăпăр.

— Эпĕ чей курăкĕ тататăпах,— çине тăчĕ Унтри вырăнĕнчен тапранмасăр.

Тарас та самантлăха чарăнса тăнăччĕ. Унтри патне пырасшăн пулчĕ вăл. Ăна пĕччен хăварас килмерĕ ун. Кĕçтенкки малаллах утрĕ, Тарас унран юлмарĕ, кăштахран каялла çаврăнса пăхрĕ.

— Унтри! — кăшкăрчĕ вăл. — Часрах хăваласа çит пире! Эпир хуллен кайăпăр!

Тарасăн сасси пăшăрхануллăн илтĕнчĕ.

«Мана пăрахса кайнăшăн пăшăрханать, хăйне айăплă туять», — шухăшларĕ Унтри йăваш кăмăллă Тарас пирки. Вăл пĕрре кăна мар çакна асăрханă: Тарас туслăха юратать, хирĕçекене, чĕрре кĕрекене çиййĕнчех мирлештересшĕн вăл. «Пирĕн, тантăшсен, пĕртăвансем пек пулмалла, лайăх пурăнмалла!» — тет вăл час-часах.

«Мĕншĕн-ха халĕ мана кĕтмерĕ? — тĕлĕнчĕ Унтри. — Кĕçтенккие те каламарĕ. Ман майлă пулмарĕ. Ăна итлерĕ. Мĕншĕн?»

Тараса та, Кĕçтенккие те Унтри хытах кӳренчĕ. «Кĕтмерĕç. Вĕсем хыççăн каймастăп ак», — терĕ вăл хăйне хăй. Çапах та кăштахран ку шухăша улăштарчĕ. Амăшĕн сăмахне — «Кĕçтенккие итле, унран ан уйрăл», — тенине аса илчĕ вăл. Чей курăкне пĕр çыхă татрĕ те прачак çине чупса тухрĕ Унтри.

Уçланка унран маларах çитнĕ Кĕçтенккипе Тарас хурăн çырли татма пуçланăччĕ ĕнтĕ. Унтри килнине курсан, вĕсем хытах савăнчĕç.

— Унтри, кунта кил! Кунта! Кунта нумай! — чĕнчĕç иккĕш те, пĕр-пĕринпе ăмăртса пекех.

— Юрĕ, — хирĕç тавăрчĕ Унтри, анчах тантăшĕсем çывăхне пыма васкамарĕ. Вырăнта тăрса, йĕри-тавралла пăхрĕ — хĕпĕртерĕ: çырла чăнах та сахал мар тата питĕ шултра. Хĕвел питтинче пин-пин кăвар пек йăмăхать. Курăкĕ те парка, çӳллĕ. Шел, тĕллĕн-тĕллĕн ăна такам таптама ĕлкĕрнĕ. Ĕнер Унтри хăйĕн пиччĕшĕпе кунта мар, юнашар сĕвекре, урăх уçланкăра, пулнăччĕ. Кунта, эппин, урăх çынсем çӳренĕ. Унтри малалла иртрĕ те шăлан тĕмисем хӳттине



Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА
32701чув

пӗшкӗнчӗ. Ку вырӑнта ҫырла чылайрах пек курӑнчӗ ӑна.

— Кунта ма килместӗн, Унтри? — ыйтрӗ Тарас. — Эс, мӗн, ҫиллентӗн-и? Ҫилленме сӑлтав ҫук сан.

«Мӗнле ҫук? — шухӑшларӗ Унтри. — Мана пӗччен хӑвартӑр. Чей курӑкне асанне питӗ юрататъ. Унпа вӑл чей вӗретет. Тӗл пулсан, татма каланӑччӗ. Эсир пилӗк минут та кӗтмерӗр... Эх!» — хӑй кӳреннине вӑл тантӑшӗсене ҫавах усҫӑн пӗлтермерӗ.

— Ҫилленмен эпӗ. Ҫырли ман патра та пур, — хуравларӗ Унтри, кӑмӑлне хытарса.

Тантӑшӗсем чӗнмен пулсан, Унтри кӑмӑлӗ хӑвӑртрах ҫавӑрнатчӗ, тен. Хытӑ тарӑхни те ун ытти чухне вӑраха пымастчӗ, иртетчӗ. Халӗ вӑл ниепле те лӑпланаймасть. Ӑшӗ ҫаплах вӑркать. Кӗҫтенкки патне мар, унран кунтарахри Тарас ҫывӑхне те Унтри кайма пултараймарӗ: чунӗ туртмарӗ. Вӗсенчен аяккарахра кӑна лайӑхрах пек туйӑнчӗ ӑна.

Шап-шурӑ пӗчӗк карҫинккине хӑй умне лартса, ҫырла курӑкне енчен енне тайӑлтарса, вӑл икӗ аллипех ҫырла татма васкарӗ. Калаҫмасӑрах. Ерипен-ерипен малалла куҫса пычӗ. Шӑлан тӗмисем хыҫне, сайра курӑксем хушшине, ҫитрӗ. Юлташӗсем курӑнми пулчӗҫ.

— Унтри, ӑҫта эс? — ыйтрӗ Тарас вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн.

— Кунтах, — сасӑ пачӗ Унтри. «Кунтах та, — терӗ хӑй ӑшӗнче вӑл, — ҫырла сахалланчӗ. Ӗнерхи ҫӗре каяс мар-ши? Тӗкӗнмен вырӑн юлнӑччӗ унта, чылай пысӑкчӗ. Тараса та чӗнес мар. Шырачӑрах мана!.. Карҫинккана тултарӑп та килӗп. Тӗлӗнччӗр!»

Тантӑшӗсем ӑна урӑх кӑшкӑрса чӗнмерӗҫ. Вӗсем пӗрпӗринпе калаҫнине ҫеҫ илткелерӗ Унтри. Кӗҫех вӑл ҫӳҫеллӗ хурӑнлӑх витӗр тухрӗ те шӗшкӗллӗ юманлӑха пырса кӗчӗ. Ӗнер вӑл шӑпах ҫакӑнта пулнӑччӗ пек хуларан килнӗ пиччӗшӗпе. Сукмак пурччӗ. Ҫырма хӗрринчи ҫутлӑха анатчӗ вӑл. «Ӑҫтарахчӗ-ши? Инҫех мар пуль-ха, ӑна тупатӑпах», — тесе, шӗшкӗ турачӗсене сиркелесе, ҫине-ҫинех пӗшкӗнсе, унта-кунталла пӑркаланса, утрӗ те утрӗ ача.

Тӳрех, тӗрӗсех пынӑ пек туйӑнчӗ ӑна. Анчах... улталанчӗ. Хӗвел хулӑн пӗлӗтпе хуплансан, Унтри анӑҫалла мар, кӑнтӑралла, вӑрман ӑшнелле ҫаврӑнса кайрӗ. Кирлӗ сукмакӗ унӑн айккине юлчӗ. Ҫакна ача сисмерӗ те.

Утма йывӑрланнӑҫемӗн йывӑрланчӗ. Те вайлӑ ҫил-тӑвӑл кӑкласа пӑрахнӑ, те ватӑлса, ҫӗрӗшсе ӳкнӗ йывӑҫсем умлӑнхыҫлӑн тӗл пулма тытӑнчӗҫ. Пӗр ҫӗрте вӗсенчен пӑрӑнса иртме хӑтланнӑ Унтри хулпуҫҫи ҫӳллӗшех ӳснӗ ҫӑра курӑкпа кӑшт ҫех чӑлханса ӳкмерӗ.

Тепӗр тӗлте, нӳрӗ мӑклӑ юман каски урлӑ каҫнӑ чухне, вӑл хура тунката ҫинче кустӑрма пек выртакан ҫӗлене курчӗ те, ҫав тери шикленсе, каялла чакрӗ, ҫаврӑнса тарчӗ. Самантран, тӑп чарӑнса, йӗри-тавралла тинкерчӗ.

Пуҫне каҫӑртнӑ ҫӗлен чашкӑрнӑ пек туйӑнчӗ ӑна. Унтри ҫӳҫенсе илчӗ. «Ы-ых, усал! Ирсӗр!» — терӗ те вӑл, ҫав ҫӗлен тӗлне тата пырса тухасран шикленсе, айккинелле кайрӗ.

Ун шучӗпе, шӗшкӗлӗх пӗтмеллеччӗ ӗнтӗ. Утрӗ-утрӗ — шӗшкӗлӗх хӗрри курӑнмарӗ. Чӑтлӑхланчӗ. Каҫ енне кайрӗ. Сукмак ҫук та ҫук. «Пулмаллаччӗ-ҫке... Ӑҫта? Хӑш енче?.. Ҫухалса каяс мар...» — Унтри чарӑнчӗ.

Хӑйне кирлӗ ҫултан вӑл паҫӑрах пӑраннӑ. Ӑна вӑл халь темле шырасан та тупаймӗ. Ҫакна ун пурпӗрех ӗненес килмерӗ. «Кунта пӗрре мар килнӗ. Аташман. Паян аташса ҫӳрӗп-и?!. Ҫук!» — хӑйне хӑй ҫапла хавхалатма тӑрӑшса, урӑх пӗртте иккӗленмесӗр пек, Унтри тата малалла талпӑнчӗ.

Чылай пычӗ вӑл ҫӑра ҫатракаллӑ шӗшкӗлӗхпе. Туратсене ҫӗкле-ҫӗкле е аяккалла сире-сире, аллисем ун ыратма тытӑнчӗҫ, тӗллӗн-тӗллӗн юнӑхрӗҫ. Малтанах вӑл хӑшпӗр ҫӗрте, уҫӑрах вырӑнта, чупкаларӗ те, ҫӳллех мар тункатасем е ҫӗрӗк каскасем урлӑ сике-сике каҫрӗ. Курӑкпа витӗннӗ лакӑма ӳксе чӗркуҫҫине хытах шӑйӑрттарсан, васкаса утма та пӑрахрӗ вӑл.

Тӗттӗм чӑтлӑх пӗтрӗ. Вӑрӑм та сарлака уҫланкӑ пуҫланчӗ. Унтри савӑнсах кайрӗ. Ӗнер пиччӗшӗпе ҫырла татнӑ тӗле ҫитнӗнех туйӑнчӗ ӑна.

«Çакăнтахчĕ пуль... Çырма пурччĕ. Ăçтарахчĕ-ха?» — Унтри унталла-кунталла пăхкаларĕ — çырма курăнмарĕ.

Çӳллĕ те çăра курăклă тӳрем варринче хăрăк тăраллă, армак-чармак ватă юман ларать. Ĕнерхи вырăнта ун евĕр юман çукчĕ.

Унтри, хăй çухалса кайнине тинех ăнланса, сасартăк хăраса ӳкрĕ. Хăй сисмесĕрех кăшкăрса ячĕ:

— Кĕçтенкки-и-и!.. Тара-а-а-ас!

Паллах, нимле хурав та пулмарĕ. И-и-и!.. а-а-а!.. ахрăм кăна уçланкă вĕçĕнче, Унтрие йĕкĕлтенĕ пек, кăштах йăнласа илчĕ.

Унтри тата хытăрах кăшкăрчĕ:

— Тара-а-а-ас!.. Кĕçтенкки-и-и!

Çырла татасси çинчен шухăшлама та пăрахрĕ вăл. Умĕнче, сулахайра, сылтăмра — ăçта пăхнă унта пиçнĕ хурăн çырли хĕп-хĕрлĕ курăннине те вăл халĕ асăрхаман пек пулчĕ. Унăн пĕртен-пĕр тĕллевĕ — вăрмантан часрах тухса, киле хăвăртрах çитесси.

Халех, пĕртте тăхтамасăр вĕçтерĕччĕ Унтри кунтан, анчах хăйсен ялĕ хăш енчине ниепле те чухлаймасть. Хĕвел те çук, нимĕн тума аптăрамалла. Кăшт çеç йĕрсе ямарĕ. Йĕретчех пуль, инçех мар чăтлăхран тухнă пăшипе пăрушĕ уçланкă урлă каçнине курчĕ те курăк хушшине пĕшкĕнчĕ: чĕрчунсем тапăнасран шикленчĕ. Çав вăхăтрах ытла инçех те мар аслати вăраххăн кĕмсĕртетрĕ.

«Пирĕн вăрмантан ял еннелле тухас тесен, çурçĕрелле утмалла», — ăнлантарнăччĕ пĕррехинче Унтрие куккăшĕ. Ăçта çав çурçĕр? Мĕнле пĕлмелле ăна?

Биологи учителĕ иртнĕ çуркунне Унтрисене пĕтĕм класĕпех çак вăрмана ертсе килнĕччĕ. Тавралăхăн тĕрлĕ енĕсене мĕнле паллăсемпе пĕлмелли çинчен вăл питĕ тĕплĕ ăнлантарнăччĕ. Темшĕн-çке Унтри ăна тимлĕ тăнламарĕ, пĕрмай юлташĕпе пăшăлтатрĕ. Çавăншăн вăл халĕ хытах ӳкĕнчĕ: «Эх, ухмах пулнă çав эпĕ!» Халĕ пулсан, хăйĕн вĕрентекенне вăл пĕр сăмах сиктермесĕр итлĕччĕ, вара уçланкăри пĕ-

ччен юман патне пырĕччĕ те: «Акă,— тейĕччĕ,— çурçĕр енĕ: ку енче вулă ытла та мăклă, мăк сахалли — кăнтăр енĕ, вăл енче туратсем те нумайрах, вăрăмрах».

Уçланкăн икĕ енчи хурăн, ăвăс, юман турачĕсене Унтри пĕр хут мар тинкерчĕ. Вĕсем ăна пурте — сулахайрисем те, сылтăмрисем те — пĕр тĕлелле, уçланкă варринелле, туртăннă пек курăнчĕç. Мăк пирки те учитель тем каланă пек туйăнчĕ ăна, анчах вăл çав мăка ватă вулăсем çинче мар, аялта, çĕр çинче, шырарĕ, çĕрĕк тунката çумĕнче тупрĕ — тем чул пăхса тăрсан та ним ăнланаймарĕ.

Вăл, кил хăш енчине пĕлме ниепле те ăс çитерейменнишĕн хуйхăрса, çумăр çывхарнине манса, çĕрĕк тунката умĕнче чылайччен тăчĕ. Аслати малтанхинчен хытăрах авăтса ячĕ те, Унтри чăтлăха каялла кĕчĕ. Хăй килнĕ шĕшкĕллĕ юманлăх витĕр каялла кайма шутларĕ вăл.

Шĕшкĕ çатракине тек-текех çĕклесе е урапа пусса, ўкес пек тайăлнă йывăçсем айĕнчен пĕшкĕнсе тухса е урлă каçса, ача самаях ĕшенчĕ. Пĕр тĕлте вăл, юман çумне сĕвенсе кăштах кансассăн, пĕтĕм вăйне пухса пек, каллех тантăшĕсене чĕнчĕ:

— Кĕçтенкки-и-и!.. Тара-а-ас!..

Хăй тĕллĕн çак вăрмантан ниепле те тухаяс çукка пек туйăнма пуçларĕ ăна. «Килте кĕтĕç-кĕтĕç — кĕтсе илеймĕç,— шухăшларĕ Унтри.— Анне вара урам урлă Кĕçтенккисем патне чупса каçĕ. «Ман Унтрие ăçта хăвартăр?» — тейĕ... Тарасран та ыйтĕ. Тарăхĕ вĕсене, айăплĕ... Чей курăкне киле таврăннă чухне татмаллаччĕ пуль... Йăнăш турăм эпĕ... Хамах йăнăш турăм...»

Халсăрланнă, хурлă шухăша путнă Унтри тавралăха та сăнами пулчĕ. Вăрман хуралнăçемĕн хуралчĕ. Çутă е тĕттĕм— Унтришĕн пурпĕрех пек. Çумăр çума тытăннине те — йăлтăркка тумламсем çулçăсем çине ўке-ўке вакланса сирпĕннине — вăл пачах асăрхамарĕ. Каç сĕмлĕхне çиçĕм çĕççи йăр та яр касса çурсассăн кăна вăл малалла, каялла хăраса пăхса илчĕ, хуллен-хуллен утса, çывăхри юман хўттине çитсе

тăчĕ. Аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче пысăк йывăç айне кĕме юрамасть тенине те, ваттисем вĕрентсе каланине, манчĕ вăл.

Çумăр чашлатса, кĕрлесех çурĕ. Витререн мар, çав тери пысăк каткаран тăкăнчĕ пуль шыв. Аслати, таврана тăр-тăр-тăрр! чĕтретсе, çине-çинех аватрĕ. Çумăр майĕпен иртсе кайрĕ. Лачкам йĕпеннĕ Унтри юман çумĕнче тăчĕ-тăчĕ те лăпчăнса ларчĕ, унтан, питĕ ывăннăскер, тĕлĕрсе кайрĕ.

— Ачам!.. Ача-а-ам! Вăран-ха, вăран...

Унтри куçне уçрĕ. Умĕнче ют çын тăрать. Те ватă, те çамрăк — пĕлме çук: питне хура сухал хупланă. Шупкаланнă кăвак кĕпе çухийĕ петлицăллă. Хулпуççи урлă пĕчĕк сăран сумка çакнă.

«Вăрман хуралçи ку»,— тавçăрса илчĕ ача хăвăртах.

— Пĕчченех-и эс? — ыйтрĕ лесник питĕ кăмăллăн.— Хăш ялтан?

Унтри ял ятне каларĕ.

— Алманчăран? У-у-у, ачам, инçе килнĕ эс. Вăрман урлă кăшт çеç каçайман...

Вăрман хуралçи ăна ял хĕррине çитиччenex ăсатса ячĕ. Тарăн шухăша путса, çав тери салхуллăн пырса кĕчĕ тăван килне Унтри.





# МУЛКАЧ ТА ТУТĂ ПУЛТĂР

— Унтри, эсĕ манпа çулçӳреве пыратăн-и?—ыйтрĕ ашшĕ ирхи апат хыççăн. Иккĕмĕш класра вĕренекен Унтри çакна çеç кĕтетчĕ. Паян вырсарникун. Шкула каймалла мар. Мĕншĕн уçăлма ан тухтăр-ха вăл ашшĕпе пĕрле çак çутă, таса, кăшт сивĕрех хĕллехи ир.

Çула хатĕр ĕнтĕ вăл. Çутă сарă урай варринче шап-шурă çăматтисемпе тăпăртатса кăна тăрать: пӳртрен часрах тухасшăн. Хура цигейка кĕрĕкĕн çухине тăратнă, çăмламас çĕлĕкĕн хăлхисене усса янă.

— Ах, ачам,—терĕ амăшĕ, Унтри çĕлĕкне пусарах лартса, хăлха çаккисене çыхса.—Капла эсĕ часах тара ӳкĕн. Пӳртре ăшă. Тух-ха тулалла. Унта кĕт аçуна.

...Акă ĕнтĕ Унтрипе ашшĕ уйра йĕлтĕрпе пыраççĕ. Вĕсен хыçĕнче, кăпăшка юр çинче, икĕ мăшăр йĕр юнашар тăсăлать. Аякран пăхсассăн, йĕрĕсем иккĕшĕн те пĕрешкелех курăнаççĕ, çывăхран — пачах урăхла. Ашшĕн йĕрĕ тӳп-тӳрĕ, самай тарăн, Унтрин — ăшăх та пăркаланчăк, хĕррисем те тикĕс мар — е сарăлса кайнă, е каскаланса пĕтнĕ.

Унтри çакна асăрхамасть-ха.

Малтанах, хĕл ларсанах, Унтри йĕлтĕр ҫине тăрасшăн та марччĕ-ха. Вăл, унпа ҫӳреме хăнăхманскер, час-часах ӳкетчĕ те: «Кирлĕ мар мана йĕлтĕр! Луччĕ ҫунашкапа ярăнатăп!» — тетчĕ. Чăнах та, ҫапла каланă хыҫҫăн ик-виҫĕ кун та иртетчĕ — Унтри йĕлтĕр туйине тытса та пăхмастчĕ. Ҫакă хытах пăшăрхантарнă Унтри ашшĕне. Пĕррехинче вара вăл, кашни эрнерех вăрман хĕрринчи ҫырмари пĕве пăрне шăтарма ҫӳрекенскер, Унтрие хăйпе пĕрле пыма чĕнчĕ. «Атя, ачам, пĕрле кайса килĕпĕр,— терĕ вăл.— Атту пĕччен мана кичем. Иккĕн — иккĕнех... Йĕлтĕрпе лайăхрах пулĕ: юр тарăн». Хавассăнах мар та, ҫавах килĕшрĕ Унтри. Ашшĕ ăна ҫул ҫинчеваскатмарĕ. Тӳрем ҫĕрте йĕлтĕрсене лайăх шутарма, сăртран аннă чухне тĕрĕс тăма вĕрентрĕ вăл ăна. Каларĕ кăна мар, йăлтах хăй кăтартса пычĕ.

Тепрехинче Унтри хăй ирĕккĕнех: «Эп те санпа пыратăп»,— терĕ ашшĕне.

Халĕ Унтри ҫине пăхать те ашшĕ йăл кулать — савăнать: Унтри йĕлтĕрпе ҫӳреме хăнăхса ҫитет. Авă, сарă бамбук туйисене вăл епле ҫăмăллăн илтерсе пырать! Хĕл пуҫламăшĕнчи пек майсăррăн лартмасть вĕсене, тирĕнтерсе те хăвармасть. Хăй тайкаланма пăрахнă. Чылай пысăк тăвайккирен те хăюллăнах анать ĕнтĕ. Сайра хутра ҫеҫ ӳкет, ăнсăртран пек. Уншăн вăл тарăхмасть, хăйĕнчен хăй кулать: «Вăт,— тет,— эпĕ чăн-чăн катемпи, ӳкмелле мар ҫĕртех ӳкрĕм...»

Кĕҫех, нумай та вăхăт иртмĕ, илемлĕн, вăрăммăн ярăнса чупĕ йĕлтĕрпе Унтри. Тăрăшать ача, ҫине тăрать. Ҫăмăллăх шырамасть вăл.

Ашшĕ: «Ман йĕрпе, ман хыҫра пыр»,— тенине те итлемерĕ ак. «Манăн юнашар пулас килет»,— терĕ. Хăйĕн вăйне кăтартас килчĕ унăн.

Ашшĕ ҫумĕнчен хăпмасть-ха Унтри. Унăн та йĕлтĕрĕсем умĕнчи юра ҫăмăллăн касаҫҫĕ, чĕреҫҫĕ. Туйисем чăк-чак! чăк-чак! тăваҫҫĕ. Ҫав вăхăтрах вăл ашшĕ ҫутҫанталăк пирки ҫĕнĕ япаласем каланине те илтмесĕр юласшăн мар.

Унтри ашшĕ чылай ҫул вăрманта пурăннă, лесник пулнă.

Халĕ вăл яла куçса килнĕ, урăх ĕçре. Йывăççене, вĕçен кайăксене, чĕрчунсене вăл питĕ юрататъ. Вĕсем çинчен тем те каласа паратъ. Унтри тимлĕ тăнлатъ, мĕн илтнине астуса юлма тăрăшатъ.

Иртнинче, çак çулпа кайнă чухне, ашшĕ ăна тĕрлĕ пулăсем, вĕсен тĕлĕнмелле пурнăçĕ çинчен каласа кăтартнăччĕ. Çав кун тин Унтри пĕве пăрне мĕншĕн шăтарсах тăма кирлине пĕлчĕ. «Вак куçĕ пулмасан, шыва сывлăш кĕреймест. Вара пулăсем пăчăхса вилеççĕ»,— терĕ ашшĕ. Эппин, вăл çав пулăсене пурăнма пулăшатъ: сывлăш парса тăратъ.

Унта, пĕве çинче, пилĕк хӳтлĕх ларатъ. Шĕшкĕ çатракисем тăратса, ыраш улăмĕпе хупласа тунă вĕсене Унтри ашшĕ. Юр кĕрсе туласран пĕр шăтăк та хăварман. Пуринче те шалта вак куçĕ пур. Çыранра чи çывăх хӳтлĕхре лум упранатъ. Унпа таккаса ватать Унтри ашшĕ шăнма ĕлкĕрнĕ пăра. Хăйĕн ĕçне вăл яланах çав хӳтлĕхрен пуçлатъ, унтан иккĕмĕшне куçатъ, виççĕмĕшне... Паян та вăл çавăн пекех ĕçлĕ. Анчах унччен чылай каймалла-ха. Вар урлă каçас пулатъ, вăрман хĕррипе иртмелле...

— Унтри, тăхта-ха, кăштах кан,— терĕ ашшĕ, тăп чарăнса, ăна хирĕç çаврăнса.

— Шурă юр, шурă юр тетпĕр. Çапла-и?.. Чăнах та шапшурă-и вăл?

— Шурă!— каларĕ Унтри çирĕппĕн, пĕртте иккĕленмесĕр.

— Килĕшетĕп. Çывăхра шурă... Çапах эс, ачам, инçетерех пăх-ха — малти вар енне, вăрман енне.

Çĕлĕкне çӳлерех тĕксе лартрĕ те Унтри, пуçне каçăртса, аяккалла тимлĕн сăнарĕ. Чылай хушă тинкерчĕ. Ашшĕ чăтаймарĕ:

— Халь мĕн калăн?— ыйтрĕ вăл.

— Кăвакрах пуль,— тавăрчĕ Унтри.

— Тĕрĕс. Кăштах çутă кăвакрах. Çавăн пек вăл таса юр уяр çанталăкра,— килĕшрĕ ашшĕ.

«Чăнах та кăвакрах. Çывăхра кăна вăл шап-шурă,— шухăшларĕ ача.— Епле-ха çакна эп хальччен асăрхаман?»

Вăрман тĕлĕнчен иртнĕ чух уй улмуççийĕ çийĕнче чарăна пĕлми чĕвĕлтетекен çерçи ушкăнне курчĕ Унтри. Ушкăнри икĕ кайăк пĕртте ыттисем пек мар — сарă. «Мĕншĕн-ха апла? — тĕлĕнчĕ Унтри. — Ялта ун пеккисем çук-çке...»

— Атте, çерçисенчен иккĕшĕ ма сарă? — питĕ пĕлесси килчĕ ачан.

— Хăшĕсем-ха вĕсем — унашкаллисем? — текелесе улăм çинче кĕшĕлтетекен кайăксене сăнама тытăнчĕ Унтри ашшĕ.

Кăшт вăхăт иртсен, вĕсене асăрхарĕ те çапла ăнлантарчĕ:

— Кусем — шĕпшĕлсем, ачам. Çулла та, хĕлле те кунтах пурăнаççĕ, кăнтăра вĕçсе каймаççĕ. Хĕлле çерçисемпе пĕрле çӳреççĕ, çулла — уйрăм. Юррине илтнĕ пуль эс. Вăл кайăк çапларах юрлать: «Ĕçле-ĕçле çи... Ĕçле-ĕçле çи...»

Шĕпшĕлсемпе ытти кайăксем çинчен ашшĕ питĕ тĕплĕн ăнлантарнине итле-итле Унтри сисмерĕ те, вĕсем пĕве патне çитрĕç.

— Вашмак сăрт пур, авă, çӳллĕ мар. Эс ярăн çавăнта, — сĕнчĕ Унтрие ашшĕ. — Атту шăнатăн. Эпĕ хамăн ĕçе тăвам. Юрĕ-и?

— Юрать! — килĕшрĕ Унтри.

Ашшĕ кăтартнă сăртран вăл темиçе хут та ярăнса анчĕ. Пĕрре çеç ӳкрĕ. Хăрах туйи юр çинче ларса юлчĕ те, Унтри сулăнса кайрĕ: тытăнса тăраймарĕ. Кулкаларĕ вăл уншăн.

— Ку ăнсăртран пулчĕ, — терĕ вăл. — Урăх ӳкместĕп!

Унтри хăй сăмахне тытрĕ. Çавăншăн ăна ашшĕ мухтарĕ.

— Маттур! — терĕ вăл. — Малашне тата маттур пул...

Ашшĕ вак куçĕсене уçса пĕтерсен, вĕсем ялалла çул тытрĕç. Кунта килнĕ чухнехи пекех, иккĕшĕ те юнашар пыраççĕ.

Унтри ĕшеннĕ. Анчах та вăл хăй çакна палăртасшăн мар. «Атту тепринче атте хăйпе илмĕ», — шухăшлать вăл. Çавăнпа самант-самантăн ашшĕнчен ярăнса иртме тăрăшать.

Унтри чылаях ывăннине ашшĕ паçăрах асăрхарĕ, çавах нимех те шарламарĕ. «Ачана пăшăрхантарас мар», — терĕ вăл хăй ăшĕнче. Йĕлтĕрсене вара хуллентерех те хуллентерех шутарчĕ. Акă вăл чарăнса тăчĕ: сăлтавĕ тупăнчĕ.

— Унтри, кур-ха,—терӗ вӑл.—Мӗнле йӗр ҫакӑ? Пӗлетӗн-и?

Пӑхрӗ-пӑхрӗ Унтри, анчах ним калама та пултараймарӗ. Кун пек йӗрсене курнӑ-ха вӑл: икӗ путӑк юнашар, тепри иккӗшӗ — умлӑ-хыҫлӑ, вара каллех иккӗшӗ юнашар... Мӗнле чӗрчун йӗрӗ вӑл? Унтрие хальччен никам та ун ҫинчен каламан.

— Пӗлместӗп,— хуравларӗ Унтри, хӑйне ытла та ӑшӑ пулнипе ҫаккисене салтнӑ ҫӗлӗкне кӑшт ҫӗклесе.

— Мулкачӑн вӑл,— пӗлтерчӗ ашшӗ.— Астуса юл. Ҫавӑн пек вӑл чупать... Авӑ, кунта,— терӗ вӑл кӑшт кайсассӑн,— йӗр таталнӑ: мулкач аяккалла сикнӗ ҫак вырӑнта.

— Атте, унта, ав, пӗр вырӑнтах вӑл тапӑртатнӑ-им, йӗрӗсем питӗ нумай?— ыйтрӗ Унтри, вар урлӑ каҫнӑ чухне сӗвек ҫыр енне йӗлтӗр туйипе тӗллесе.

— Тӗрӗс. Унта вӑл пӗр вырӑнтах ҫаврӑнкаланӑ, ларнӑ та...

Ҫапла калаҫа-калаҫа, мулкача йӗрлесе пекех, Унтрипе ашшӗ хӑйсен пахчине ярӑнса кӗчӗҫ. Сарай патнерех ҫитеспе Унтри кӑшкӑрса ячӗ:

— Атте!— терӗ вӑл.— Пӑх-ха, мулкач кунтах килнӗ. Ав, йӗрӗ! Мӗн тума килнӗ вӑл?

— Апат шыраса,— хуравларӗ ашшӗ.

Унтан вӑл Унтрие акӑ мӗн каласа пачӗ. Хӗлле мулкачсем выҫӑпа аптӑраҫҫӗ-мӗн. Ҫулла вӗсем тӗрлӗ курӑк, йывӑҫ ҫулҫи ҫиеҫҫӗ. Сивӗсем пуҫлансан, ҫулҫӑ-курӑк пӗтсен, ӑвӑс тураттисене кӑшлаҫҫӗ. Анчах та хӗлле юр тарӑнланса-тарӑнлансах пырать, пӗчӗк йывӑҫ тӗмисене, турачӗсене йӑлтах хупласа лартать. Ирӗксӗрех вара, утӑ сапаланчӑкӗ-тӑккаланчӑкӗ шыраса, яла, пахчасене, вите-сарай таврашне килме тивет мулкачсен.

Ҫакна Унтри пӗлменччӗ. Халӗ вӑл мулкача питӗ хӗрхенчӗ.

— Атте,— терӗ вӑл,— сарай алӑкне уҫса хӑварар-и?

— Мӗншӗн? Юр кӗртме-и?— ыйтрӗ ашшӗ, ним тавҫӑрман пекех.

— Мулкач та тутӑ пултӑр, пурӑнтӑр,— тавӑрчӗ Унтри.

Ашшӗн сӑн-пичӗ ялтӑрах ҫуталса кайрӗ. Ачин ырӑ кӑ-

мăлĕшĕн хытă савăнчĕ вăл хальхинче. Хăй çав самантрах мунча çенĕкне кĕчĕ те кивĕ сетка йăтса тухрĕ.

— Акă, — терĕ вăл, — çакăнта утă тултарар та пахча хыçне çакар эппин. Юрать-и?

Унтри килĕшрĕ. Халь ĕнтĕ вăл хĕпĕртесе ӳкрĕ: ашшĕ ăна ăнланчĕ, ун майлă пулчĕ...

Иккĕшĕ те пӳрте çав тери хавассăн пырса кĕчĕç.





# САВӐНӐҪ

Типшӗрсе хуралнӑ ҫӗрулми аврине Укахви кинемей кушӑрканӑ аллипе туртса кӑларчӗ те, ун ҫине пӑхса, тӗлӗннӗ пек пулчӗ. «Пӗтӗмпех хӑрса ларнӑ, улмисем те таталнӑ. Ҫынсенчен кая юлтӑм»,— кулянса шухӑшларӗ вӑл.

Кӗтмен ҫӗртен чирлерӗ кинемей. Ватӑ ҫынна нумай кирлӗ-и? Пӗркун анкартинче сивӗ ҫумӑр айӗнчех тӗрлӗ вак ӗҫпе тӗрмешнӗччӗ вӑл. Ҫавӑн чухне йӗпенни килсе ҫапрӗ пулас.

Ҫӗрулми лаптӑкӗ Укахви кинемейӗн пысӑках мар, пахчин чӗрӗкӗ те ҫук. Ҫавах та вӑйпитти икӗ ҫын икӗ кун кӑлармалӑх пур-ха. Ҫырса пӗлтернӗ пулсан, университетра вӗренекен юратнӑ мӑнукӗ Шупашкартан килетехчӗ ӗнтӗ. Ҫӗрулми те кӑларса хӑваратчех. Ҫук, ҫыру ҫырмарӗ ун патне Укахви. Хӑй чирлесе ӳкессе пӗлмен-ҫке вӑл. «Хамах кӑларса пӗтерӗп»,— тесе шутланӑ.

Халиччен тертне нумай курнӑ ӗнтӗ ватӑ хӗрарӑм. Кирек мӗнле ӗҫре те вӑл хӑех вӑй хума тӑрӑшнӑ. Мӑшӑрӗ фронта кайрӗ те унта хыпарсӑр ҫухалчӗ. Укахви икӗ ачапа тӑрса юлчӗ. Ывӑлне те, хӗрне те чиперех пӑхса ӳстерчӗ вӑл. Халӗ унӑн ывӑлӗ полковник, ҫемйипе инҫетре пурӑнать. Яла кил-

се курманни икĕ-виçĕ çул ĕнтĕ. Хĕрĕ Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлет. Унăн хăйĕн çемйи. Упăшки — заводра. Мăнукĕ университетра вĕренет. Сайра кăна пулин те, килкелесе каяççĕ.

Темле шухăш та пырса кĕрет Укахви кинемей пуçне. Иртнĕ пурнăç куç умне тухса тăрать. Суха тунă, тырă акнă, фермăра ĕне сунă, лаша пăхнă çамрăк хĕрарăм. Ӳкес пек ывăннине палăртман. Киле таврăнсан та ларса канма май килмен. Ачисене апат пĕçерсе е ăшăтса çитернĕ, кĕпе-йĕм çунă, çĕтĕлнине юсанă, саплăк çине саплăк лартнă, арланă, пир тĕртнĕ, алсиш-чăлха çыхнă, кĕпе-йĕм çĕленĕ, килти сурăх-качакине пăхнă — тем тума та ĕлкĕрнĕ.

Чирлĕ кинемей паян килĕнче вăрах кăштăртаткаласа çӳрерĕ те урăх чăтаймарĕ, пахчине тухрĕ. Кĕреçе илсе, çĕрулми кăларма пикенчĕ вăл. Пилĕк-ултă авăр кăларчĕ те сулăнса кайрĕ: вăй-халĕ пачах çук иккен. Вара, юлашки вăйне пухса, мунча патне утрĕ. Унта, ватă вĕрене айĕнче, пĕчĕк тенкел пур. Çавăнта çитсе канма шутларĕ кинемей.

Шăпах çак вăхăтра ун пахчине ачасем кĕпĕрленсе кĕчĕç. Вуннăн вĕсем. Пĕр-пĕринпе шăкăлтатса калаçаççĕ.

— Укахви кинемей! Укахви кинемей! — чĕнчĕ пĕр хĕрача уçă сассипе. — Сана çавăтам-и? — Унччен те пулмарĕ, ăна сулахай хулĕнчен тытрĕ те, мунча патне çитерсе, тенкел çине асăрханса лартрĕ. — Кинемей, эсĕ çаплах чирлетĕн-им?

Укахви кинемей тинех тăна кĕнĕ пек пулчĕ. Ачасене тинкерчĕ. Малтанах вĕсем ăна тĕтре ăшĕнче пек курăнчĕç. Унтан тавралăх ерипен-ерипен çуталса килчĕ те, вăл камсем килнине ăнланчĕ. Ялти ачасемех иккен. Шкулта вĕренекенсем.

— Чирлетĕп-ха, — терĕ вăл йывăррăн. — Ниепле те сывалаймастăп... Эсир ăçта каятăр тата?

— Эпир, кинемей, сана пулăшма килтĕмĕр, — терĕ ăна çавăтса килнĕ хĕрача.

— Эпир çĕрулми кăларса парасшăн сана, — сăмах хушрĕç ыттисем. — Эсĕ чармастăн-и?

Хĕрарăм ним калама пĕлмерĕ. Кирлĕ сăмах тупаймарĕ.

Ачасем кĕтмесĕр-чĕнмесĕр пулăшма килни ăна питĕ савăнтарчĕ, тĕлĕнтерчĕ те.

— Сире кам та пулин ячĕ-и? Хушрĕç-и? — ыйтрĕ вăл.

Ачасем кайăксем пек чĕвĕлтетрĕç:

— Хамăрах килтĕмĕр.

— Никам та хушман пире.

— Эсĕ чирлени çинчен илтрĕмĕр...

Кинемее тенкел патне çавăтса пынă хĕрача, пуринчен те кăмăллăрах калаçаканскер, пилĕк кил урлă анатарах пурăнакан пускилсен Маруçĕ иккен. Ватă хĕрарăм палласа илчĕ ăна.

— Мару-у-уç! — тăсарах каларĕ Укахви кинемей. — Мĕнле ӳссе кайнă эс! Сăнупа аннӳнех хывнă... Питĕ пысăкланнă. Çулла курман сана. Лагере кайнă терĕç-и?..

Астăвать-ха кинемей: Маруç амăшĕпе унăн ывăлĕ шкула ялан пĕрле çӳретчĕç. Кайран çулĕсем уйрăлчĕç. Маруç амăшĕ халь те хĕр чухнехи пекех ĕçчен, ырă кăмăллă. «Хĕрачине вăл хушнă ĕнтĕ мана пулăшма», — шухăшларĕ кинемей, ăшĕнче ăна тав туса.

— Эсĕ миçемĕш класа çӳретĕн-ха, Маруç? — ыйтрĕ вăл.

— Кăçал улттăмĕшне каятăп, — терĕ хĕрача. — Пире паян йывăç ларттарчĕç: воскресник ирттертĕмĕр. Ĕçе кăнтăрла тĕлне вĕçлерĕмĕр те — хамăр урамри хăшпĕр ачасем — сире çĕрулми кăларма пулăшас терĕмĕр, — пĕлтерме васкарĕ вăл.

— Ку санăн йăмăку пулас, пĕр сăнлах, — пĕлесшĕн пулчĕ Маруçпа пĕрле çӳрекен хĕрача пирки кинемей.

— Çапла, манăн йăмăк вăл, Таиç ятлăскер. Пиллĕкмĕш класа çӳрет. Ак ку — пирĕн кӳршĕ Костя. Пĕр класра вĕренетпĕр.

— Паллатăп-ха ăна, — терĕ хĕрарăм, пуринчен те пысăк арçын ача çине кăмăллăн пăхса.

Ытти ачасемпе те паллашрĕ вăл. Çичĕ хĕрача та виçĕ арçын ача ку йышра.

— Укахви кинемей, кĕреçесемпе хусăксем, витресем ăçташи? Эпир халех ĕçе тытăнасшăн, — васкарĕç ачасем.

— Кăштах канăр хăть.

— Ывăнман эпир, кансах тăмăпăр.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ ман сирĕнпе?.. Хăвăрăн ирĕк, эппин,— терĕ кинемей, витресемпе кĕреçесем ăçтине кăтартса.

Часах хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ. Пахчара ачасен сасси çеç. Шăкăл-шăкăл калаçу, янăравлă кулă чарăна пĕлми илтĕнсе тăраççĕ. Ачасем кил хуçинчен час-часах ыйтаççĕ:

— Кинемей, çĕрулмине пуçтарсах пымалла-и? Кăштах типсе вырттăр-и?

— Кинемей, ăçта йăтмалла?..

Укахви паварта апат хатĕрлеме пуçларĕ. Маруç пĕр çĕклем шыв йăтса килчĕ, нӳхрепрен тăварланă какай илсе тухрĕ. Таиç çĕрулми шуратрĕ, çурĕ, купăста касса турарĕ, хуран айне вутă хурса тăчĕ... «Чăнах та вăр-вар хĕрачасем,— шухăшларĕ Укахви кинемей.— Амăшне те, ашшĕне те хывнă. Иккĕшĕ те пĕрешкелех маттур та — нихçан ахаль лармаççĕ, шутсăр тирпейлĕ. Асламăшĕ те çавăн пекехчĕ. Тырă вырма тухсан, унăнни пек тăп-тăп хитре кĕлте никамăн та çукчĕ...»

Лайăх кăмăллă, ĕçчен те хаваслă ачасем Укахви кинемее çав тери килĕшрĕç. Вĕсем тăрăшнине курса, вăл нихçанхинчен ытларах хĕпĕртерĕ-и, тен.

— Ачасем,— терĕ вăл,— сире килтисем çухатрĕç пуль. Уроксем тумалла тата... Учительсенчен мана пула сăмах ан тивтĕрччĕ сире.

— Эсĕ, кинемей, ан пăшăрхан. Ним пирки те. Кулянма юрамасть сана... Уроксене эпир ĕнерех хатĕрленĕ,— хуравларĕ Маруç.

— Маруç тĕрĕс каларĕ, кинемей,— ун сăмахне çирĕплетрĕ Таиç.

— Килтисем эпир кунта килнине пĕлеççĕ,— хушса хучĕ Костя.— Каласа хăварнă.

Ытти ачасем те пахчара çапла шавларĕç:

— Нумай юлмарĕ!

— Каçчен ĕлкĕретпĕр!

Ачасем ĕçе пĕр-пĕрин хушшинче пайланă. Пĕрисем çĕр-

улми кăлараççĕ, теприсем пуçтараççĕ, виççĕмĕшсем, ыттисенчен вăйлăрах Костьăпа Хĕветĕр, ăна çатанпа, витрепе йăта-йăта тĕпсакайне антараççĕ. Каярахпа нӳхрепе антарма тытăнчĕç. Туллипе те, пушăлла та утса мар, чупсах çӳрерĕç иккĕшĕ те.

Хĕвел каç енне сулăннă тĕле ачасем çĕрулмине кăларса, пуçтарса пĕтерчĕç. Кинемей вĕсене пӳрте илсе кĕчĕ, апат çитерчĕ, пылпа чей ĕçтерчĕ.

— Ăшăрсем хыпрĕç пуль. Мĕн чул ĕç турăр паян!.. Ĕçĕрха, ĕçĕр. Акă пыл,— сĕнчĕ вăл, кашнин умнех чей чашăкĕ тулли пыл лартса.— Пылне ан хĕрхенĕр. Чĕресĕпех вăл ман.— Пурин çине те, хăйĕн мăнукĕсем çине пăхнă пекех, питĕ юратса пăхрĕ.— Эх, ачасем, мĕнле тав тăвас-ши сире?.. Çĕрулми юр айне юлĕ тесе сехре хăпнăччĕ ман. Ара, чир вăраха кайрĕ те... Ирĕн-каçăн кулянаттăм... Тавах, тавах сире! Пурсăра та!..

Ачасенчен ниепле те уйрăлас килмест Укахви кинемейĕн. Кашнинех ыталаса тытса, пуçран ачашлама та хатĕр вăл.

— Ытла вĕри пулчĕ пуль чейĕ. Тарларăр, ав... Тӳрех тухма юрамĕ, уçăрах. Пăртак тăхтăр, ачасем,— терĕ те вăл çӳлĕк çинчи кивĕ кĕнекесем хушшинчен кăвак хуплашкаллă хулăн альбом туртса кăларчĕ.— Çакна пăхкалăр, ахаль лариччен. Юрĕ-и?

— Пăхар,— хаваспах килĕшрĕ Маруç, Укахви кинемей аллинчен илнĕ альбомпа çемçе симĕс диван хĕррине кайса ларса.

Тантăшĕсем ун çумне ларса тухрĕç.

— Ку эсĕ пуль ĕнтĕ. Çапла-и?— ыйтрĕ Маруç, пĕрремĕш сăнӳкерчĕкех Укахви кинемей еннелле çавăрса кăтартса.— Мĕн тери хитре хĕр пулнă эсĕ, кинемей! Юнашарри кам-ха? Вăл та хитре. Тăрхала питлĕ. Хулăн çăра çӳçне ла-ай-айăх тураса, хыçалалла çавăрса хунă. Çӳллĕ.

— Манăн упăшка вăл,— хулленрех хуравларĕ Укахви кинемей. Салхуланчĕ. «Хурланнине палăртса, ачасен кăмăлне хуçас мар»,— шухăшларĕ вăл.— Ун чух,— терĕ, хавассăн-

рах куранма тăрăшса,— эпир ял Советĕнчен таврăнтăмăр, хут ҫыртарса... Учительччĕ вăл. Яла фотограф килнĕччĕ. «Картăчкă ӳкерекен» терĕҫ. Урамра, упăшка киленчен инҫе мар... Халăх пухăннă. Камăн укҫа ҫук, ҫăмарта парса сăн ҫаптараҫҫĕ. «Атя, Укаҫ (ҫапла чĕнетчĕ мана вăл), ӳкерĕнер, асăнмалăх»,—терĕ упăшка. Чунĕ сиснĕ пуль ҫав: асăнмалăх, пăхмалăх ҫавă ҫеҫ юлчĕ... Иксĕмĕр пĕрле ӳкерĕнмен урăх. Икĕ ҫултан, вăрҫă тухсанах, вăрҫа кайрĕ те... таврăнмарĕ.

— Ăҫта вилнĕ вăл?— ыйтрĕ Костя.

— Пĕлместĕп ҫав,— терĕ Укахви кинемей.— Виҫĕ ҫыру ҫеҫ яма ĕлкĕрчĕ.«Тĕп хуларан анăҫалла виҫҫĕр ҫухрăм ытла килтĕмĕр. Паян-ыран ҫапăҫăва кĕретпĕр... Тем пулма та пултарĕ. Ачасене чипер пăхса ӳстерме тăрăш, Укаҫ»,— ҫырнăччĕ вăл юлашкинчен. Август уйăхĕнче илтĕм ăна... Вилни ҫинчен хут килмерĕ.

— Кайран та-и?— ыйтрĕ Костя татах.

— Кайран та... Вăрҫă пынă чух военкомата темиҫе те ҫитрĕм. Шыратпăр-ха, шыратпăр терĕҫ. Темле... Ним те калаймарĕҫ. Вăрҫă хыҫҫăн шыраттартăм та, «Хыпарсăр ҫухалнă» тенĕ хут ярса пачĕҫ. Мĕнле ҫухалнă? Ăҫта? Хăҫан? Паллă мар. Тен, бомба айне лекнĕ. Тен, шыва путнă. Тен, вутра пĕтнĕ... Ним те юлман пуль.

— Пенси панă-и сана уншăн? Ачусене?—пĕлесшĕн пулчĕ Хĕветĕр.

— Ҫу-ук, пĕр пус та илмен... Ҫав хут килсен, ыйтса пăхрăм та, хыпарсăр ҫухалнисемшĕн пенси памастпăр терĕҫ собесра. Саккунĕ хушман ĕнтĕ.

— Пăх-ха, ашшĕ вăрҫăра вилнĕ, ачисене пулăшман та,— тарăхрĕ Таиҫ.— Мĕнле усранă вара эс вĕсене, кинемей?..

— Выҫăллă-тутăллă. Ытти ҫынсем пекех. Пурнăҫĕ ун чух чылайăшĕн пĕр майлă пулнă... Тем те курнă ĕнтĕ. Чăтнă.

— Ку тата кам?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Маруҫ альбом листисене уҫнă май.— Тракторĕн кабини те ҫук. Кустăрмисем пы-ысăк! Тимĕр шăллă! Ларчăкĕ ҫинче — руль тытнă илемлĕ хĕрача. Эсĕ-и, кинемей?

— Эпĕ,— лăпкăн тавăрчĕ вăл.— Хĕрача мар, икĕ ача амăшĕ... Вăрçă пуçлансанах: «Хĕрсем — трактор çине!» — терĕç. Çавăн пек чĕнӳ тухнăччĕ. Арçынсен вырăнне камăн та пулин тăмалла-çке. Эпĕ — комсомолка. Кайран вара МТСра тракториста вĕренмелли курс уçнăччĕ. Хам ирĕкпех кайрăм. Ачасене, ывăлпа хĕрачана, аннепе хăвартăм. Вунă çул МТСра ĕçлерĕм. Пĕрмай колхозран колхоза куçаттăмăр тракторсемпе, çуркуннерен — хура кĕрчченех.

— Лайăх ĕçленĕ пуль-ха эс, кинемей? — ыйтрĕ Укахвие тинкерсе ларнă Маруç, куçне сăнӳкерчĕк çине тĕллесе.— Ав, епле хаваслă тухнă эс кунта!

— А-а-а,— çепĕççĕн кулса илчĕ Укахви кинемей.— Эпĕ мĕн тăхăннине пăхăр-ха. Асăрхарăр-и? Шупашкартан фотограф килчĕ. «Манăн сана хаçат валли ӳкермелле. Кăçал çуракинче эсĕ пуринчен лайăх ĕçленĕ, чи мала тухнă. МТС директорĕ каларĕ»,— тет. Чăнах, плана икçĕр процентах тултарнăччĕ... «Çук, тетĕп, ӳкерттерместĕп». «Мĕншĕн? — ыйтать хаçат çынни, тĕлĕнет.— Ӳкермесен, тет, редактор мана çапса пăрахать». Кулатăп. «Пăрахтăрах»,— тетĕп. «Санăн, тет, чуну пур-и? Тархасшăн, хĕрхен мана». Эпĕ çилленнĕ пек пултăм. «Эсĕ куççăр-и? Сăранланса, хуралса пĕтнĕ çĕтĕк фуфайкăпа мĕнле ӳкерĕнем?» — тетĕп. Пичĕ ун ярр! çуталса кайрĕ. «Э-э-э, тет, ăна çиччас улăштаратпăр». Вăрт çаврăнчĕ те ялалла чупа пачĕ. Такамран çак кĕпене çĕклесе таврăнчĕ. Çанни, ав, ытла кĕске, чавса таран кăна пек, арки чĕркуççирен те çӳлерех...

— Ӳкерчĕкĕ пичетленчĕ-и?

— Кăларчĕç,— терĕ Укахви кинемей.— Хаçатне упраттăм-ха.

— Эсĕ, кинемей, парне те илнĕ пуль апла? — ыйтрĕ Маруç.

— Илнĕ. Авă сăмавар çине мĕн çырса хунине вулăр-ха.

Хĕветĕр сĕтел çинчи сăмавара ачасем патне йăтса пычĕ те ун çинчи сăмахсене вуларĕ:

«Ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухнă трактор бригадин бригадирне... 1945 çул. МТС дирекцийĕ».

Кашни хăйĕнчен хăй тĕлĕнчĕ: «Мĕнле асăрхамарăмăр чей ĕçнĕ вăхăтра эпир çакна?»

— Укахви кинемейĕн орден та пур,— пĕлтерчĕ Таиç.— Анне каланăччĕ...

— Чăнах-и?

— Хăçан илнĕ?

— Мĕншĕн?

— Эпĕ илтмен те...

— Намăс пире: аслисем çинчен ним те пĕлместпĕр,— хĕрӳленсех шавларĕç ачасем.

— Пурне те ăçтан пĕлĕр-ха?— лăплантарма пăхрĕ вĕсене Укахви кинемей.— Ордена аллăмĕш çултах пачĕç те... Ун чух сирĕн аçăрсемпе аннĕрсем те пĕчĕк ачасем кăна пулнă.

Нумайччен калаçса ларчĕç ачасем Укахви кинемейпе. Тем çинчен те ыйтса пĕлчĕç.

— Тавтапуç сана, кинемей. Тепре килĕпĕр. Ун чух тата нумай ыйтса пĕлĕпĕр,— терĕç вĕсем, кинемейпе сывпуллашса.

Савăнăçлăн кайрĕç ачасем. Укахви кинемей те хытă савăнчĕ. Вĕсемшĕн те, хăйшĕн те.



## ТУПМАЛЛИ

Тавах, ачам . . . . . . . . . . . . . . . 5
Хӑравҫӑ . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Йӑнӑш . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Мулкач та тутӑ пултӑр . . . . . . . . 23
Савӑнӑҫ . . . . . . . . . . . . . . . . . 29

*Для младшего школьного возраста*

**Лидия Алексеевна КОВАЛЮК**

**ТАВАХ, АЧАМ**

**(СПАСИБО, СЫНОК)**

Рассказы

На чувашском языке

Редактор В. П. Тимаков
Художник М. А. Андреева
Художественный редактор М. Д. Давлятшин
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор З. И. Гаврилова

ИБ 2460

Сдано в набор 16.02.90. Подписано к печати 05.10.90. Формат 70×90 1/16. Бумага офсетная № 1. Гарнитура школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,92. Усл. кр.-отт. 11,68. Учетно-изд. л. 1,67. Тираж 10000 экз. Заказ № 818. Изд. № 73. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

10 п.

Чăваш кĕнеке издательстви

